К 74.2
Л 25
4-35994
Шемур.

Герман Ларшников

# Ялти шкул — пĕлӳ çăлкуçĕ

(Васанти вăтам шкул 100 çулта)



Шăмăршă, 1997 г.

Национальная библиотека ЧР
4-035994

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ

обозначенного здесь срока

М т. 3 50 1990 г.т. 5000

к
К 7А.2
Л 25

Герман Ларшников

# Ялти шкул — пӗлӳ ҫӑлкуҫӗ

К74.246.711

Обязат. экз.

# Юратнă шкулăм

Сăвви Иван САЛАНДАЕВАН
Кĕвви Михаил СТАРЫЙАН.

1. Сар хĕвел ачашлать Васана,
Чечекпе илĕртет çуркунне.
Хаклă тусăм, чĕнетпĕр сана
Хăнана, тăван шкул уявне.

**Хушса юрламалли:**

**Çĕр çулта пирĕн шкул, çĕр çулта,**
**Кам кăна вĕренмен-ши кунта?**
**Агроном, ученăй, тракторист...**
**Пирĕн шкулшăн вĕсем пысăк чыс.**
**Пирĕн шкулшăн вĕсем,**
**Пирĕн шкулшăн вĕсем,**
**Пирĕн шкулшăн вĕсем пысăк чыс!**

2. Улмуççи ешерет пахчара,
Хумханать вăл ăшă çилпе.
Пĕлӳ илнĕ Федотов шкулта,
Ăс вĕрентнĕ мухтавлă Илпек...

**Хушса юрламалли.**

3. Нихăçан манăçми тусăмсем,
Салансан та таçта инçене,
Ватă шкул уявне килĕрсем
Манас марччĕ ăна ĕмĕрне.

**Хушса юрламалли.**

ПРОВЕРЕНО
20 02 ИЮН 2017

4—35994

Национальная библиотека Чувашской Республики

# 1. Ялти шкул—пĕлӳ çăлкуçĕ

Пурнăçри мĕнпур çул-йĕр шкултан пуçланать тесен те йăнăшмастăп пулĕ. Кашни çынах ӳссе çитсен те, ватăлсан та — пĕрремĕш класа, тăван шкула, юратнă учительсене яланах ырăпа аса илет. Ачалăхри чи телейлĕ çулсем хамăр вĕреннĕ шкулпа çыхăннă. Унта эпир вулама-çырма, шутлама хăнăхнă. Тата та ытларах шкулти учительсем пире ырăпа усала, лайăхпа начара уйăрса илме, тăван халăха юратма, атте-аннене, асли сене хисеплеме ,çутçанталăка, тăван тавралăха упрама, çĕршыва юрăхлă çын пулма вĕрентнĕ.

Вăхăт иртет, ăру хыççăн ăру шкултан вĕренсе тухса пурнăç çулĕ çине тăрать. Çапах та аллă, вăтăр е пилĕк çул каялла вĕренсе тухнисем те хăйсене вĕрентнĕ учительсене, тăван шкула, хаваслă ачалăха, пĕрле вĕреннĕ юлташсене нихăçан та асран кăлармаççĕ. Юбилейсем вара утса тухнă çул çине каялла çаврăнса пăхма хистеççĕ. Акă, кăçал Васанта шкул уçăлса ачасене вĕрентме пуçланăранпа 100 çул çитет. Çак ятпа шкулта çитес вăхăтрах чаплă уяв пулмалла. Юбилее кĕтсе илме шкулти ачасемпе учительсем, ашшĕ-амăшĕсем, ял адинистрацийĕпе халăх музейĕ хĕрсех хатĕрленеççĕ. Мĕнле хатĕрлемен-ха—çĕршывăн мĕнпур кĕтесĕсенчен пуçтарăнаççĕ çке-ха тăван шкула тĕрлĕ вăхăтра пĕтерсе тухнисем, шкулта ĕçленĕ учительсем, хăнасем, ял халăхĕ.

Паян Васанти вăтам шкул районта чи лайăххисен шутĕнче. Кирпĕчрен купаласа тунă икĕ хутлă шкулта хăтлă та çутă клас семпе пӳлĕмсем, ĕç урокĕсем ирттермелли мастерскойпа çĕвĕ цехĕ, пысăк спортзал, столовăй, шкул çумĕнчех учительсене пурăнмалли икшер хваттерлĕ икĕ çурт,тимĕр карта тытнă стадион, пысăк сад пахчи,теплица,гараж тата ытти те.Кашни предметпах темелле ятарлă кабинетсенче ачасене вĕренмелли пособисем

пе тӗрлӗ оборудовани ҫителӗклӗ. Ака,информатикӑпа электрон лӑ шутлав техникине вӗрентмелли кабинетра Японире туса каларнӑ компьютерсем вырнаҫтарнӑ.Ф.Н.Егоров учитель (вӑлах шкулти завуч та) уроксене питӗ тӑрӑшса тата хавхаланса ирттерет. Ачасем те юратса ҫӳреҫҫӗ ҫак урока. Физика кабинечӗ (учителӗ Ш.Ш. Исмагилов), географи (учителӗ М. Г. Еремеев), математика (учителӗ С. Д. Егорова), тӑванъен культурипе истори (учителӗ Г. Н. Ларшников), пуҫламӑш классем (учителӗсем М. Г. Тюнтеровапа И. И. Ендиерова), шкулти столовӑй (аслӑ поварӗ С. А. Краснова) районта лайӑххисен шутӗнче. Вӗренӳ кабинечӗсенчен нумайӑшне районти ҫутӗҫ пайӗ хисеплӗ «Хӗрлӗ дипломсем» парса чыс тунӑ.

Юлашки ҫулсенче Николай Иванович Ендиеров ҫамрӑк директор тӑрӑшнипе шкулӑн сӑн-сӑпачӗ те палӑрмаллах лайӑх енне улшӑнчӗ. Шкулта таса, тирпейлӗ, урайне ҫемҫе линолиум сарнӑ, пӳлӗмсен алӑкӗсене илемлетсе эрешленӗ, чӳречесем ҫинче илемлӗ карӑсем ҫакӑнса тӑраҫҫӗ, иккӗмӗш хутри актовӑй залра та тирпей-илем кӗртнӗ, стенасене тӗрлӗ тӗслӗ ҫуллӑ сӑрӑ семпе илемлетнӗ. Хальхи вӑхӑтра шкул пурнӑҫне, унӑн историне сӑнлакан стендсене шкул коридорне вырнаҫтарас ӗҫе пуҫӑннӑ. «Хуҫи мӗнле — хуҫалӑхӗ ҫапла»,— тесе тӗрӗс каланӑ ҫав ваттисем.

Шкулта учительсен туслӑ коллективӗ ӗҫлет. «Халӑха вӗрентес ӗҫ отличникӗсем», С. Д. Егорова, О. В. Антонова, Е. Я. Яковлева, Д. В. Макарова, М. Г. Тюнтерова, «Аслӑ учитель» Н. А. Архипов, М. Г. Еремеев, Н. Н. Архипова, Р. Г. Смаева, Ф. Н. Егоров учительсем, Л. А. Ворожцова библиотекарь ачасене вӗрентсе воспитани парас ӗҫре 20—30-шар ҫул ӗҫлесе пысӑк опыт пухнӑ, вӗсем кашни урокрах ачасене тарӑн пӗлӳ парассишӗн нумай тӑрӑшаҫҫӗ. Шкулти 22 учительтен 19-шӗ вырӑнтисем, вӗсенчен 16-шӗ ҫак шкултан тӗрлӗ вӑхӑтра вӗренсе тухнӑ.

Вӑтӑр икӗ ҫул хушшинче шкултан 1136 хӗрпе каччӑ вӑтам пӗлӳ илсе тухнӑ. Вӗсенчен 5-шӗ (Вячеслав Павлов, Лев Павлов, Людмила Журавлева, Андрей Яковлев, Надежда Архипова) кӗмӗл медальпе вӗҫленӗ. Вӑтам шкул пӗтернӗ 70 ҫынран 37-шӗ юлашки 5 ҫул хушшинче кӑна аслӑ тата ятарлӑ вӗренӳ заведенийӗсене вӗренме кӗнӗ, вӗсенчен 15-шӗ учитель професси не суйласа илнӗ.

Васан шкулне тӗрлӗ ҫулсенче пӗтернӗ виҫӗ ҫын ученӑй ятне

тивĕçнĕ: Васанти 7 класлă шкула пĕтернĕ, Пуянкасси ялĕнче çуралса ÿснĕ Федотов Михаил Романович — профессор. Вăл филологи наукисен докторĕ, академик, тĕнчипех паллă тюрколог. Поляков Николай Дмитриевич — математика наукисен кандидачĕ, Чăваш патшалăх университечĕн преподавателĕ, кафедра пуçлăхĕ. Унăн наука ĕçĕсемпе Европăри тĕрлĕ çĕршыв сенчи паллă университетсем математика вĕрентес ĕçре анлăн усă кураççĕ.Журавлева (Муравьева) Людмила Петровна—медицина наукисен кандидачĕ, Чулхулари медицина институтĕнчи кардиологи центрĕн пуçлăхĕ. Унăн йăмăкĕ — Галина Петровна — Шупашкар хулинчи тĕп неврапатолог. Евдокимов Владимир Александрович — Мускаври Курчатов ячĕпе хисепленекен наукăпа тĕпчев институчĕн инженерĕ, наука сотрудникĕ. Тюнтеров Виталий Иванович — тĕпчевçĕ-геолог, Самарăри тĕпчев институчĕн наука сотрудникĕ, наукăпа тĕпчев экспедицийĕсене нумай хутчен хутшăннă.

Васанти шкула пĕтерсе тухнисенчен культурăпа искусствăра палăрнă çынсем те сахал мар. Ярăславра çуралса ÿснĕ Г.Ф. Митрофанов композитора кам кăна пĕлмест пулĕ. Вăл пултаруллă артист та. Чăваш патшалăх академи театрĕн артисчĕ пулса нумай çул хушши ĕçленĕ. «ЧР культура ĕçĕсен отличникĕ», «ЧР культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ятсене тивĕçнĕ. Аслă Отечествăлла вăрçă ветеранĕ, отставкăри офицер, Хĕрлĕ Çăлтăр орден кавалерĕ. Халĕ тивĕçлĕ канура, Шупашкарта пурăнать. Морозов Петр Васильевич — чаплă музыкант. Васанти шкулта 8 класс пĕтернĕ хыççăн Шупашкарти Ф. Павлов ячĕпе хисепленекен музыка училищинче вĕреннĕ. Каярах, Мускаври Гнессинсен ячĕпе хисепленекен музыкăпа педагогика институтне пĕтернĕ хыççăн Мускаври патшалăх Академи Пысăк театрĕнчи вĕрсе каламалли инструментсен оркестрĕнче ĕçленĕ. Юлашки вăхăтра тĕнчипех паллă «Виртуозы Москвы» камерлă оркестрта ĕçленĕ. Нумай вăхăт хушши çак оркестрпа пĕрле ют çĕршывсенче ĕçлесе пурăннă. Халĕ Мускавра пурăнать. Раççей оборона министерствин çар оркестрĕнче ĕçлет.

Васанта çуралса ÿснĕ, вăхăтсăр çĕре кĕнĕ Артемьев Николай Лазаревич ăста художник пулнă. Сахал пурăннă пулин те, хăй хыççăн çĕршер ÿкерчĕк хăварнă вăл. Унăн иллюстрацийĕсем республикăри журналсенче, кĕнекесенче нумай пичетленнĕ. Хальхи вăхăтра унăн 800 ытла ÿкерчĕкĕ Васанти халăх музейĕнче упранать.

Чăваш Республикинчи Художниксен союзĕн членĕ, Пуянкассинче çуралса ӳснĕ Алексеев Юрий Михайлович та Васанти вăтам шкула пĕтернĕ. Чăваш патшалăх педагогика институчĕн художествăлла графика факультетне пĕтернĕ хыççăн çак шкултах рисованипе ĕç учителĕ пулса ĕçленĕ. Юрий Михайловичăн ĕçĕсене тĕрлĕ выставкăсене тăратнă. Ятарлă выставкăсем те иртнĕ унăн, вĕсенчен пĕри — Васанти халăх музейĕнче. Çак музейрах вăл темиçе çĕнĕ экспозицисемпе пӳлĕмсене йĕркелесе илемлетнĕ.

Юлашки çулсенче палăрнă художник — Васанта çуралса ӳснĕ Евграфов Станислав Александрович Санкт-Петербургри Мухина ячĕллĕ художество академине пĕтернĕ. Раççейри Художниксен союзĕн членĕ. Унăн ĕçĕсене Болгари, Венгри, Германи çĕршывĕсенче те кăтартнă. Хамăр çĕршывра Мускав, Санкт-Петербург, Шупашкар т. ыт. хуласенче куравсем йĕркеленĕ. Иртнĕ çул унăн ĕçĕсемпе Васанти халăх музейĕнче хамăр район çыннисем те паллашма пултарчĕç. Паллă искусствоведсем унăн ĕçĕсене пысăк хак пачĕç, çамрăк художникăн малăшлăхĕ ăнăçлă пуласса палăртрĕç.

Чăваш патшалăх радиопа телевидени компанийĕн радио передачисен политика пайĕн аслă редакторĕ пулса ĕçлекен Николай Васильевич Морозов ялти вăтам шкула 1971-мĕш çулта пĕтернĕ. «Натали», «Урине савăнăçĕ», «Тупă ячĕпе» калавсем, «Çĕнĕ йăла-йĕркесене — пурнăçа» кĕнеке авторĕ. «Кĕлпук» мучи» телепьеса, «Кӳршĕллĕ пурăнар», «Шуçăмсем кунта тӳлек» повеçсем тăрăх лартнă инсцинировкăсен авторĕ те, Чăваш радиори «Кунсерен», «Ахрăм», «ИНМ», «Хурал пӳрчĕ» передачăсене йĕркелесе ертсе пыраканĕ те вăлах. Чăваш çĕршывĕнче унăн илемлĕ те тыткăна илекен сассине палламан çын та çук пулĕ. Унăн пултаруллăхĕ тĕрлĕ енлĕ. Н. Морозов Чăваш композиторĕсен ассоциацийĕн тава тивĕçлĕ деятелĕ, режиссер, актер, тĕпчевçĕ, таврапĕлӳçĕ, журналист.

Çар çыннисем те сахал мар тухнă Васанти шкула пĕтернисенчен. Ярăславра çуралса ӳснĕ, халĕ Шупашкарта пурăнакан Н. З. Чернов подполковник, Мускавра ĕçлесе пурăнакан В. П. Макаров, В.П. Николаев, П. В. Поляков (Ташкентра пурăннă), В. П. Леонтьев (Шупашкарта пурăнать), М. Л. Алексеев (Черновцы хулинче пурăнать, çар журналисчĕ) полковниксем, Белгород облаçĕнче пурăннă М. Д. Ямуков, А. Г. Егоров подполковниксем, Ф. С.Поляков майор чинĕсемпе службăна вĕçленĕ.

Паянхи Раççей çарĕнче службăра тăракансем те вунă çын ытла çак шкула пĕтернисенчен. Вĕсен шутĕнче: Мускаври Çар академийĕнче преподаватель пулса ĕçлекен Морозов Владимир Васильевич — полковник, унăн шăллĕ — Валерий Васильевич— подполковник, тепĕр шăллĕ, Петр Васильевич аслă лейтенант, преступниксен бандине пĕтернĕ чухнепуттăрсен вилĕмĕпе вилнĕ.

Пĕртăван Вячеславпа Владимир Урмаевсем те çар офицерĕсем. Хальхи вăхăтра Владимир Васильевич подполковник çар академийĕнче вĕренет. Самарин Сергей Васильевич аслă лейтенант, Кузьмин Петр Артемьевич подполковник, иртнĕ çул çеç çар училищи пĕтерсе офицер пакунĕсене илнĕ Алексей Петров лейтенант та Васан шкулне чыс кӳреççĕ. Андрей Горшковпа Владислав Митрофанов вара офицерсем пулма хатĕрленеççĕ çеç-ха, çар училищин курсанчĕсем.

Ярăслав çынни Владимир Фролов офицер та космонавтсем хатĕрлекен центрта нумай çул ĕçленĕ. Халĕ Мускавра пурăнать.

Çапах та шкул пĕтернисенчен чи хисеплисем вĕсем — тăван ялта, тăван çĕр çинче тар тăкса ĕçлесе тыр-пул, аш-какай, сĕт-çу туса илекенсем. Вĕсенчен нумайăшĕ чыс-сум, хисеплĕ ятсем, тĕрлĕ наградăсем илме тивĕç пулнă. Эпир вĕсемпе паян чăннипех те мухтанатпăр.

Мĕн тивĕçлĕ канăва тухиччен тăрăшнă тăван хуçалăхра Семенов Иван Димитриевич механизатор. Комбайнпа тырă пуçтарнă çĕрте-и, тракторпа суха тунă чухне-и, тĕрлĕ хуçалăх ĕçĕсене пурнăçланă чухне-и яланах шанса панă ĕçе тивĕçлĕн пурнăçланă вăл. Унăн ĕçне тăван çĕршыв тивĕçлипе хакланă. Иван Димитриевич «Ялхуçалăхĕн отличникĕ», Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ ялхуçалăх ĕçченĕ», «Ĕç ударникĕ» хисеплĕ ятсене, «Хисеп Палли» орден, темиçе медаль илме тивĕç пулнă.

Пĕртăван Михаил Николаевич, Сергей Николаевич, Иван Николаевич Ильинсем те ял-йыш хушшинче ятлă-сумлă çынсем. Сергей Николаевич — «Хисеп Палли» орден, Иван Николаевич па Михаил Николаевич «Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялавĕ» орденсем илме тивĕç пулнă. Михаил Николаевича вара «Ялхуçалăх отличникĕ», «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ механизаторĕ» хисеплĕ ятсем парса чыс тунă.

Çавăн пекех Тимофеев Валентин Николаевича «Ĕç Мухтавĕн» III тата I-мĕш степеньлĕ, Терентьев Валентин Александровичпа Ефимов Геннадий Дмитриевич механизаторсене III-мĕш

степеньлӗ орденсемпе, Чеменев Алексей Ильича — «Хисеп Палли», Старая Дария Ивановнана —«Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялав» орденсем парса чысланӑ. Ильин Геннадий Петрович — тракторист — «Ӗҫре палӑрнӑшӑн», Макаров Валентин Васильевич агроном «Хура тӑпраллӑ мар ҫӗрсене ҫӗнетнӗшӗн» медальсем илме тивӗҫ пулнӑ.

Чӑваш республикин ялхуҫалӑх министрӗ пулса ӗҫленӗ, Чӑваш республикин тава тивӗҫлӗ ялхуҫалӑх ӗҫченӗ» хисеплӗ ят, «Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялав» орденӗ илме тивӗҫ пулнӑ Леонтьев Геннадий Петровичпа та васансем тивӗҫлипе мухтанаҫҫӗ. Вӑл тӑрӑшнипех ялта нумай ырӑ улшӑнусем пулса иртнӗ.

Ялти ӗҫченсенчен чи малтан «Чӑваш Республикин тава тивӗҫлӗ ялхуҫалӑх ӗҫченӗ» хисеплӗ ята тивӗҫнӗ ӗҫчен вара — Фомин Николай Леонтьевич тракторист пулнӑ. Вӑл халӗ тивӗҫлӗ канура, Васан ялӗнчех пурӑнать.

Кивӗ Шӑмӑршӑра ҫуралса ӳснӗ Василий Иванович Самарина — «ЧР тава тивӗҫлӗ строителӗ», Николай Павлович Сергеевпа Виталий Порфирьевич Юманова «ЧР тава тивӗҫлӗ энергетикӗ», Васанта ҫуралса ӳснӗ Гордеева Галина Николаевнана «ЧР апат-ҫимӗҫ промышленноҫӗн тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ», Агафия Петровна Васильевапа Ольга Леонтьевна Тимофеевана «ЧР тава тивӗҫлӗ учителӗ», Ярӑславра ҫуралса ӳснӗ Куропаткина Светлана Ивановнана «ЧР Культурӑн тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ» хисеплӗ ятсем панӑ.

Районти «Шӑмӑршӑ хыпарӗ» хаҫат редакторӗ, РФ Журналистсен союзӗн членӗ Петр Иванович Фоминпа (Ярӑслав) РФ Писательсен тата Журналистсен союзӗсен членӗ, А. Талвир ячӗллӗ преми лауреачӗ Ула Тимӗр те (Владимир Николаевич Михайлов) (Кахӑрлӑ Шӑхаль) Васанти вӑтам шкултан вӗренсе тухнӑ.

Ҫак списока татах та малалла тӑсма пулать, паллах. Механизатор-и вӑл, доярка-и, учитель е культура ӗҫченӗ, ҫар ҫынни е строитель — нумайӑшӗ вӗсенчен шанса панӑ ӗҫе тӳрӗ кӑмӑлпа, хавхаланса пурнӑҫлама тӑрӑшаҫҫӗ, паянхи пӑтрашуллӑ саманана, йывӑр пурнӑҫа шута илмесӗр чунӗсене парса ӗҫлеҫҫӗ, малашлӑха ҫирӗп шанаҫҫӗ.

# 2. Пĕр емĕр каялла



**ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ Александр Утриванович Терентьев** Васан ялĕнче чи малтан ачасене хăй килĕнче 1897 çулта вĕрентме пуçланă.

— * * —

Пирĕн шкул историйĕ чăннипех те вăрăм та пуян. Унăн хăш-пĕр страницисене уçса пăхар-ха. Архиври документсем ĕлĕк Чĕмпĕр 1897-мĕш çулта, чиркӳпе прихут шкулĕ уçăлнине çирĕплетеççĕ. Ватă çынсем калана тăрăх чи малтан ялти ачасене Терентьев Александр Утриванович хăйĕн килĕнче вĕрентме пуçланă. Чĕмпĕрти вырăс мар халăхсен ачисене вĕрентмелли И. Я. Яковлев уçнă семинарине пĕтерне хыççăн вăл Пăва уездĕн чи пĕр чиркӳре священник пулса ĕçленĕ пулнă.

Ялта шкул уçăличчен пуянтарах çынсен ачисем Палтиелĕнчи, Шăмăршăри шкулсенче вĕренсе пуçл мăш пĕлӳ илнĕ. Вăл вăхăтра ял çыннисен хушшинче вулама-çырма пĕлекенсем питĕ сайра пулнăха. А. У. Терентьев, хăй священник пулнă май, ачасене те тĕн йăли-йĕркине, Турă саккунне вĕрентнĕ, кĕлĕсем юрлама хăнăхтарнă.

Тепĕр çулхине ялта икĕ класлă шкул йĕркеленнĕ. Унта Павлов Василий Павлович ĕçлеме пуçлать. Вăл та Васан ялĕнчех çуралса ӳснĕ. Хусанти педагогика семинарине пĕтерне хыççăн пĕр вăхăт Самар хулинчи шкулта ĕçленĕ, каярах хулари управăра пысăк чиновник пулса ĕçленĕ. 1898 çулта çемьипех тăван ялне куçса килнĕ.

Пултарулла учитель малтанласа арçын ачасене, тепĕр çулхине хĕрачасене те шкулта вĕрентме пуçлать. Пĕр пӳлĕмлĕ класра 10—12 ача çеç вырнаçма пултарнипе ытти ял ачисем шкула çӳреймен. 1910-мĕш çулсенче В. П. Павлов урăх ĕçе куçнă хыççăн яла Матак çынни Степанов Алексей Степанович учитель ĕçлеме килет. Анчах та часах пĕрремĕш тĕнче вăрçи тухсан, патша çарне илсе каяççĕ. Ун вырăнне çак ял çынниех, Кириллов Михаил Кириллович учительте ĕçлеме пуçлать. 1916-мĕш çулта ăна та салтака илсе каяççĕ.



УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Василий Павлович Павлов хăйĕн мăшăрĕпе .1898 çул.

Кў вăхăт тĕлне ялта (революциччен) хутла пĕлекенсен йышĕ палăрмаллах ӳсет. 1917-мĕш çул тĕлне ялти шкулта вĕреннисен шутĕнче Исаев (Кузьмин) Алексей Кузьмичпа Исаева

(Емельянова) Матрена Кузьминична пĕртăвансем (вĕсем иккĕшĕ те шкула «Мухтав хучĕсемпе» пĕтернĕ), Никифорпа Павел Викентьевич Алексеевсем, Козлов Иван Федорович (каярах вăл Донбасс шахтисенче ĕçленĕ), Алексеев Григорий Матвеевич. Терентьев Андрей Терентьевич, Исаев Владимир Исаевич (Тимрук), Терентьев Василий Никифорович. (Татьяна Ваççили), Макаров Александр Савельевич, Васильев Филип Федорович (малтан Жандаров хушаматлă пулнă), Алексеев Леонтий Васильевич, Якушов Григорий Нестерович, Терентьев Еремей Терентьевич, Сидоров Никифор Сидорович, Павлов Алексей Васильевич, Измуков Василий Леонтьевич, Ильин Василий Фомич (Хумма Ваççи), Вазанов Илья Андреевич, Миронов Павел Никифорович, Леонтьев Петр Леонтьевич, Ларионов Александр Васильевич, Орлов Дмитрий Васильевич (Патша çарĕнче унтер-офицер пулнă) пулни паллă.

## 3. Çĕнĕ самана тапхăрĕ

Революци умĕнхи тапхăрта Раççейре, çав шутрах Пăва уесдĕнче те патша саманине хирĕç юхăм вăйланса пынă. Самана улшăннине сиссе-ши А. У. Терентьев священник чиркӳ ĕçне пăрахса каллех Васанта ачасене вĕрентме пуçлать.

Октябрьти социализмла Аслă революци çĕнтернĕ чи пирвайхи çулсенчех çамрăк Совет правительстви халăха вĕрентсе çутта кăларас енĕпе питĕ кирлĕ декретсем йышăннă. Çавна май наци шкулĕсене вырăс шкулĕсемпе танлаштарнă, пур çĕрте те тăван чĕлхепе вĕрентмелли йĕрке туса хунă. Шкулсене чиркӳсенчен уйăрса пурне те çутĕç халăх Комиссариачĕн системине кĕртнĕ, вĕренӳ планĕсемпе программине çĕнĕрен пăхса тухнă, пур вĕренекене те пĕтĕмĕшле пĕр шайлă пĕлӳ памалли йĕрке туса хунă. Тĕрлĕ йышши шкулсем выранне икĕ сыпăклă (малтанхи сыпăкĕ 8—12, иккĕмĕшĕ — 13—17 çулхисем валли) пĕрпĕтĕм шкул туса хунă. Уездсемпе вулăссенче çутĕç уйрăмĕсем ĕçлеме пуçланă, учительсен пурнăç условине кăштах лайăхлатнă. Чăваш шкулĕсем валли Чĕмпĕрте И. Я. Яковлев уçнă шкулта ăста та пултаруллă учительсем хатĕрленĕ.

Совет влаçĕн малтанхи çулĕсенчех Васан ялĕнчи пуçламăш шкулта та ачасене çĕнĕлле вĕрентме пуçланă. Халĕ унта тĕнпе чиркӳ йĕркисене вĕрентмен ĕнтĕ. Революци хыççăнах ялти учитель тата шкул заведующийĕ пулма Хурăнвар ялĕнче

çуралса ӳснĕ, Чĕмпĕрти чăваш шкулне пĕтернĕ Райков Михаил Семеновича çирĕплетеççĕ. Вăл малтанласа шкулта вĕренес кăмăллă 81 ачана явăçтарнă. Анчах çакăн чухлĕ ачана пĕлӳ пама шкул çурчĕ çукки чăрмантарнă. Çавăнпа М. С. Райков пурĕ те 25 ача çеç суйласа илнĕ. Ачасене Поляков Николай тата Савалей Макаров хресченсен çурчĕсенче, каярахпа Поляков Гаврил тата Исаев Владимир (Тимрук) хресченсем патĕнче вĕрентнĕ. Вицĕ креслă шкула 25 ачаран 4-шĕ çеç вĕренсе пĕтерме пултарнă, ыттисен тĕрлĕ сăлтавсене пула шкула пăрахма тивнĕ. Йывăр пурнăç, укçа-тенкĕ, тăхăнмалли тумтир, хуткаранташ çителĕксĕр пулни кансĕрленĕ. Вицĕ креслă шкула пĕтерсе тухакансем Николаев Федор Леонтьевич (каярахпа Васан шкулĕнче чылай çул хушши учитель пулса ĕçленĕ), Архипов Григорий Федорович, Исаева Мария Владимировна тата Терентьев Фатей Александрович пулнă.

1918-мĕш çулта М. С. Райковăн граждан вăрçине тухса каймa лекет. Ун вырăнне вара Елчĕк вулăсĕнче çуралса ӳснĕ, Чĕмпĕрти учительсем хатĕрлекен чăваш шкулне пĕтернĕ çамрăк учитель Дмитриев Василий Матвеевич килет. Çав çулах вăл та граждан вăрçине тухса каять. Сапах та Васанти пуçламăш шкула хупса лартмаççĕ, Пăва уездĕнчи çутĕç пайĕ шкулта ĕçлеме Хурăнвар каччине Александров Григорий Александровича ярать. Вăл çине тăрсах ачасене йывăр çулсенче (граждан вăрçи, 1921-мĕш çулхи хăрушă выçлăх, юхăннă ялти хуçалăх. сарăлакан тĕрлĕрен йывăр чирсем) шкула пуçтарма тăрăшать, вĕренни малашнехи пурнăçра питех те кирли çинчен ял халăхне май килнĕ таран ăнлантарса парать, калаçусемпе лекцисем ирттерет, тĕнпе чиркӳ халăх тăшманĕ, социализм тума чăрмантаракан сиенлĕ вăй пулнине ăнлантарать, ял тăшманĕсен киревсĕр ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларма пулăшать.

Ачасене шкулта вĕрентес ĕç çирĕммĕш çулсенче те малалла аталансах пынă-ха, анчах шкул çурчĕ çав-çавах пулман, хресченсен çурчĕсенчех вĕрентме тивнĕ. Каярахпа шкул Патăръел таврашĕнчен куçса килнĕ пуян тутарăн раскулачит туса туртса илнĕ кил-çуртне вырнаçать, (унăн çурчĕ хальхи ял варринчи музей ларакан вырăнта пулнă). Вăл вăхăтра çак вырăнта пысăк пасарсем пулса иртнĕ. Ун чухне Васан пĕр вăхăт (1923 ç.), Шăмăршă вулăсĕн центрĕ те пулнă). Ун чухне шкула ачасене икĕ çулта пĕрре пуçтарнă. Пĕр пӳлĕмрех икĕ класс (1, 3 е 2, 4-мĕшĕсем) вĕреннĕ.

# 4. Шкул ҫěнě ҫурта куҫать

Пурăна киле ачасене текех хресченсен ҫурчěсенче вěрентсе ҫӳреме май килмен, ятарлă ҫурт кирлě пулнă.

Ял ҫыннисем ыйтнипе тата укҫа пуҫтарса пулăшнипе 1929—1930-мěш ҫулсенче Васанта 4 класлă ҫěнě шкул ҫурчě туса лартаççě. Платник ěçěсене пурнăçлама Чěмпěр тăрăхěнчи Сартункка вулăсěнчи Хăвай вырăсěсен ушкăнне тара тытаççě. Шкул никěсě валли Шăмăршăри ҫунса кайнă чиркěвěн фундаментне сӳтсе ял ҫыннисем хайсен лашисемпе турттарса параççě. Ҫак платниксен ěçěнчен ял халăхě паян кун та тěлěнет — пěренесене пурне те пěр хулăнăш та кăранташ пек тӳрě чутланă, пěрене хушшисенче «йěп чикмеллěх те» хушăк ҫук, ҫат ҫыпăçса тăраççě.

Ку вăхăтра шкулта Александров Григорий («Герей») Александрович, Райков Михаил Семеновичпа унăн мăшăрě Клавдия Ивановна ěçленě. М. С. Райков граждан вăрҫинчен 1921-мěш ҫулта таврăннă, Ярăслав ялěнче пурăннă.

1930-мěш ҫулта Райковсем Ярăславри пуҫламăш шкула ěçлеме куҫсан вěсен вырăнне Ҫěпрел районěнчи Матак ялěнче ҫуралса ӳсně Гаврилов Александр Степанович хăйěн мăшăрěпе Егорова Наталья Егоровнапа учитель пулса ěçлеме килеççě. Вăл вăхăтра шкулта 62 ача вěреннě. Учительсен ҫемьи шкул ҫумěнчи хваттерте пурăннă. Тепěр ҫулхине шкул ҫурчě ҫумне Поляков Константин Сергеевич пуян хресченěн ҫуртěнчен (хăйсене раскулачит тунă пулнă) тепěр пӳлěм хушса лартаççě.

А. С. Гавриловпа унăн ҫывăх юлташěпе пулăшаканě, Ярăслав ҫынни, Федор Никонович Урмаев, унăн арăмě Ольга Федоровна Ургалкина учительсем Васан ялěнче колхоз йěркелесе ярас ěҫре те ырми-канми вăй хураççě. Ял халăхне колхоза явăçтарас, ěçре учительсем пысăк вырăн йышăннă. Шкулта ачасене вěрентнě вăхăтрах Гаврилов Александр Степанович Васанти чи пирвайхи колхоз председателě те хăех пулнă. «Красная Победа» (каярах «Победа») колхозăн правленийě те шкул ҫуртěнчех вырнаҫнă, ҫавăнпа та шкултан тěрлěрен ыйтусене татса пама килекен ял халăхě кунěпех татăлма пěлмен. Ҫакă ěнтě ялти учительсем коллективизаци вăхăтěнче малти ретре пулнине уҫҫăн кăтартса парать.

1931—32-мěш вěренӳ ҫулěнче шкул директорěнче Губанов Сергей Яковлевич ěçленě, Вěсем Патăръелěнчен мăшăрěпе, Губанова (Павлова) Дария Васильевнăпа куҫса килнě. Вăл 1931-

мĕш çулччен Патăръелĕнче учительницăра ĕçленĕ, унтах качча тухнă пулнă, 1932-мĕш çулта С. Я. Губанов сасартăк вилсе кайнă хыççăн шкул директорĕ пулма Васанта çуралса ӳснĕ Терентьев Еремей Терентьевича уйăрса лартаççĕ, Вăл Чĕмпĕрти учительсен семинарине пĕтернĕ пулнă.

Çак вăхăтра ĕçленĕ шкулти учительсем: Терентьева Евдокия Архиповна (Е. Т. Терентьев арăмĕ), Сачков Иван Васильевич (Патирек), Салмин Иван Ефремович (Чĕмпĕр облаçĕнчи Така вар ялĕ), Широкин Николай Никифорович (Патирек), Крылов Валентин Иванович (Патирек), Козлова Евдокия Николаевна (Куйбышев обл.), Егорова Наталья Егоровна (А. С. Гаврилов мăшăрĕ), Терентьев Федор Терентьевич (вăл Васан шкулĕнче аслă шкул пĕтерсе диплом илнисенчен чи пĕрремĕш учитель), Павлова Нина Николаевна (Чаткас) шкул ачисене тарăн пĕлӳ парассишĕн ырми-канми тăрăшнă, ялти обществăлла ĕçе хастар хутшăннă.

1930—31-мĕш вĕренӳ çулĕнче Васанти 6 класлă шкултан (шестилетка) пĕрремĕш кăларăм пулнă, тепĕр çул 6 класлă шкултан 7 класлă шкул (семилетка) туса хураççĕ. 1933—34-мĕш çулсенче пĕтĕм халăх тӳлевсĕрех шкул çурчĕсене юсама, çĕнĕрен тума, шкулсем валли оборудованипе вĕренӳ пособийĕсем туянса пама анлăн хутшăннă. Малалла шкула «колхозри çамрăксен шкулĕ» теме пуçланă (ШКМ). Таврари ялсенче 7 класлă шкулсем çак вăхăтра пулманнипе (Шăмăршă шкулĕсĕр пуçне) Васанти шкула Хайпăла, Палтиел, Ярăслав, Патирек, Анат Чаткас, Тванъел (Тутар республики), Пуянкасси ялĕсенче пурăнакан ачасем те вĕренме çӳренĕ. Пĕр вăхăтра 5-мĕш класра 65 ача вĕреннĕ. Лармалли партăсемпе тенкелсем çитменнипе хăшĕ-пĕрисен урайĕнчех ларма тивнĕ. Каярахпа, учительсен йышĕ ӳссен, пĕчĕкрех йышлă классем çине пайланă.

## 5. Шкулти учитель— пулас халăх писателĕ

1931—32-мĕш вĕренӳ çулĕнче Васан шкулне ĕçлеме Николай Филиппович Ильбеков килет. Вăл ачасене вырăс тата чăваш чĕлхине вĕрентме пуçлать. Акă мĕнле аса илет Николай Филиппович пирки çав вăхăтра шкулта вĕреннĕ Михаил Васильевич Сандиеров пенсионер; «Паянхи пек астăватăп-ха, Ни-

колай Филиппович пирĕн шкулта литература кружокне йĕркелеНĕччĕ. Унта пĕтĕмпех пирĕн 5-мĕш класс çырăннăччĕ. Николай Филиппович уйăхра пĕрре алçырăвĕпе хатĕрленĕ илемлĕ литература журналĕ кăларса тăратчĕ, ăна вăл пире кашни уйăхăн пуçламăшĕнче вуласа паратчĕ. Журналта эпир те, вĕренекенсем, статьясем, сăвăсем çыраттăмăр.

Пĕр çул çеç ĕçлерĕ Николай Филиппович пирĕн шкулта. Унтан ăна Шăмăршăри çутĕç пайĕн инспекторĕ пулса ĕçлеме куçарчĕç. Каярахпа вăл Чăваш Патшалăх издательствине ĕçлеме куçрĕ. Виçпӳрт-Шăмăршăра çуралса ӳснĕ писатель хăйĕн ачалăхне «Тимĕр» ятлă кĕнекинче лайăх та тĕплĕн çутатса панă вăл повеçе Владимир Бараев-Сĕркке поэта халаллана».

Акă, тата Н. Ильбековăн вĕренекенĕ пулнă Рябов Федор Алексеевич аса илнинчен: «Николай Филиппович учитель питĕ хастар комсомолецчĕ, çавăнпа ăна ялти куштан-пуянсем питех юратмастчĕç пулмалла. Пĕррехинче вĕсем, çурçĕр иртсен пирĕн учитель пурăнакан хваттере (вăл Вазанов Илькка патĕнче хваттерте тăнă) пырса алăкĕсене çĕмĕрсе кĕме пуçланă, вăйлă хĕнесшĕн пулнă ĕнтĕ, анчах Николай Филиппович чӳречерен тухса тарса хăтăлма ĕлкĕрнĕ. Тепрехинче ялти пуçтахсем комсомолецсене ял совет кантурĕнче дежурствăра пулнă чухне (ун чухне учительпе пĕрле хуралта эпĕ тата Смаев Никита Евсеевич та пулнăччĕ) пӳрт маччине çĕмĕрсе кĕрсе тапăнма пуçларĕç. Каллех чӳрече витĕр урама сиксе тухса хăтăлма ĕлкĕртĕмĕр.

Ун чухне пирĕн шкулта та комсомол ячейки йĕркеленĕччĕ. Чи малтан 7-мĕш класра вĕренекенсене комсомол ретне илчĕç. (Васан ялĕнче комсомол ячейки 1929-мĕш çулта йĕркеленнĕ). Вĕренӳре ĕлкĕрсе пыракан, хастарлăхпа палăрса тăракан Тимофеев Александр, Ларионов Алексей, Яковлев Дмитрий, Смаев Никита, Ефимов Николай, Кузьмин Михаил т. ыт. те, мĕнпурĕ 12 çамрăк комсомолец пулса тăтăмăр, мана шкулти ячейка секретарьне суйларĕç».

## 6. «Троцкист» тесе айăплама пăхнă...

1937-мĕш çулта, ялти куштан-пуянсем-ши, е кĕвĕçекенсем, курайман çынсем элекленипе Еремей Терентьевич Терентьев шкул директорне «троцкистсем» майлă тесе шкул директорĕн

ĕҫĕнчен те, учительтен те хăтараççĕ. Учительсен коллективĕ, ял Совечĕпе колхоз активисчĕсем ҫине тăрса пулăшнипе çеç Е. Т. Терентьева салтавсăр айаплассинчен хăтарса хăвараççĕ. Унăн ячĕ таса пулнине 1940-мĕш ҫулта çеç палăртнă. Вăл каллех шкул директорĕ пулса ĕҫлеме тытанать.

Ачасене вĕрентнисĕр тата шкул ĕçне йĕркелесе пынисĕр пуçне Еремей Терентьевич ялти обществăлла ĕҫе те хастар хутшăнать. Ялти çамрăксенчен вăл 1932-мĕш çулта колхоз хорне тата халăх инструменчĕсен ансамбльне йĕркелесе ярать. Çак хор районта кăна мар, республикипех чапа тухнă, темиçе хутчен те Шупашкарти уявсемпе концертсене хутшăннă, хаклă парнесем илме тивĕç пулнă.

Е. Т. Терентьев нумай çул хушши шкул директорĕнче ĕçленĕ, ялта колхоз йĕркелеме хастар хутшăннă. Пĕр вăхăт вăл ревкомисси председателĕ пулнă, ялти хресченсен комитетне ертсе пынă. «Халăх юрри-кĕввине чĕререн юрататчĕ, ял çыннисене хора явăçтарма пĕлетчĕ», — аса илет ЧР тава тивĕçлĕ учителĕ, Е. Т. Терентьевăн вĕренекенĕ пулнă Агафия Петровна Васильева пенсионерка.

Е. Т. Терентьев Чĕмпĕрти учительсем хатĕрлекен семинари пĕтернĕ. Ĕçри тăрăшуллăхшăн ăна «Ударник-просвещенец» хисеплĕ ят панă (награда хучĕ тата вăл вылянă сĕрме купăс халĕ Васанти халăх музейĕнче упранаççĕ). 1942—45 çулсенче Тăван çĕршыва фашистсенчен хӳтĕленĕ, «Паттăрлăхшăн», «Вăрçăри тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн »медальсем илме тивĕç пулнă. Вăрçă хыççăн та вăл нумай çул хушши Васан шкулĕнче ачасене вĕрентнĕ.

## 7. Ялти шкул — культурăпа пĕлӳ вучахĕ

Пурнăç ун чухне йывăр пулнă (паян та çăмăлах мар, паллах) — анчах обществăлла ĕçсенчен никам та пăрăнман, учительсем ял культурине аталантарассишĕн ырми-канми тăрăшнă, çавăнпах, тен, ял хушшинче вĕсем яланах пысăк хисепре пулнă, вĕсене пурте хисеплесе пуç тайнă. (Ман шутпа хальхи учительсен вĕсенчен тĕслĕх илмелли питĕ нумай — Г. Л.). Ун чухне, ялта клуб пулманнипе, шкул культура вучахĕ шутланнă.

Ялти çынсен пысăк пайĕ çĕнĕ культурăшăн, пĕлÿшĕн кĕрешме букварьтен, хăйсен хутпĕлменлĕхне пĕтернинчен тытăннă. Патша саманинчен юлнă çав тĕттĕмлĕхпе массăллăн кĕрешесси, халăхсен хушшинчи хутпĕлменлĕхе пĕтересси (ликбез) çинчен ятарлă саккун кăларсан тапранса кайнă. Çав саккун тăрăх 8 çултан пуçласа 50 çула çитичченхи çынсен пурин те тăван чĕлхепе е вырăсла (хăйсен кăмăлне кура) хут вĕренмелле пулнă. Хутпĕлменлĕхе пĕтермелли пунктсемпе çыхăннă мĕнпур граждансене, пур повинноçран та хăтарнă. Васанта ликбез çурчĕ Исаев Тимрук тата Кузьмин Алексей Кузьмич çурчĕсенче пулнă. Вĕренекенсен ытларах пайĕ, паллах, ялти шкула çÿренĕ.

Ликбез ĕçне çине тăрсах пурнăçлама тытăннă. Ял çыннисене вулама-çырма вĕрентес ĕçре уйрăмах ялти учительсем, комсомолецсем, шкулта аслă классенче вĕренекенсем тăрăшнă. Уйрăмах Алексеев Михаил Леонтьевич, Кузьмин Павел Васильевич, Кузьмин Михаил Николаевич, Павлов Николай Герасимович, Николаева Ольга Леонтьевна нумай ĕçленĕ. Ун чухне кашни вĕреннĕ çыннăн 2 çынран кая мар вулама-çырма вĕрентмелле пулнă.

Çав вăхăтрах ялти учительсемпе комсомолецсем, çамрăксемпе шкул ачисем ял çыннисем валли тĕрлĕрен спектакльсемпе концертсем лартнă, лекцисемпе калаçусем ирттернĕ, çĕршыври, тĕнчери лару-тăру çинчен ăнлантарнă, хаçатсемпе кĕнекесем вуласа панă. Концертсемпе спектакльсем шкул коридорĕнчех иртнĕ, ял халăхĕ кaççерен шкула е вулав çуртне пуçтарăннă.

Вăтăрмĕш çулсенче шкулта учительсен йышĕ те пысăклансах пырать, шкулти ачасен шучĕ те ÿсет. Сăмахран: «1937-мĕш çулта Васанти тулли мар вăтам шкулта 157 ача, вăтам шкулсенче (Палтиел, Шăмăршă) 31 çын, аслă шкулсенче 4 çын вĕренеççĕ («К о л х о з н и к сасси», № 52, 4. 06. 37 ç.). «Ачасене вĕрентмешкĕн п и р ĕ н ш к у л çукчĕ. Шкул çулне çитнĕ ачасенчен 20 проц. анчах вĕренкелеме çÿретчĕç. Ялти çынсенчен хутла пĕлекенсем 13 проц. анчах пулнă. Ялта трахом, кăрчанкă, туберкулез чирĕпе асапланакансем нумайччĕ. Тĕттĕм халăх çывăхра больницăсем çуккипе юмăç карчăксем патне кайса нумай хĕн курнă. Халĕ пирĕн, социализмла патшалăхра, пурнăç йăлтах урăхланчĕ... Совет учрежденийĕсенче 30 çын тĕрлĕрен ĕçсенче вăй хураççĕ. Вĕсенчен 11-шĕ учитель пулса ĕçлеççĕ. Çапла ĕнтĕ пирĕн ялтан Хĕрлĕ çар ко-

4-35994



НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ
РЕСПУБЛИКИ

мандирĕсем, танкистсем, шоферсем, телеграфистсем тата ытти ответлă ĕçсенче тăрмашакансем те пур», — çырать çак хаçатрах А. Вазанов хăйĕн «Ял сăн-сăпачĕ улшăнать» статьинче.

Васанти шкулта 1931—1940-мĕш çулсенче хĕрĕх ытла учитель ĕçлесе курнă. Вĕсенчен нумайăше пĕрре е икĕ çултан ытла ĕçлемен, учительсем час-часах улшăнса тăнă. Çапах та вĕсенчен хăшпĕрисене асăнса хăвармаллах пуль тетĕп: Туктарова Нина Николаевна (Чаткас), Павлова Нина Николаевна (Ульяновск обл.), Муллин Михаил Александрович (Патирек), Никитин Леонид Никитич (Патирек), Сачков Иван Васильевич (Патирек), Падиарова Галина Степановна (Виçпÿрт), Широкин Николай Никифорович (Патирек), Широкина Полина Егоровна (Патирек), Антонов Николай Митрофанович (Хурăнвар), Кудряшов Павел Васильевич (Куршанкă), Галкин Василий Гордеевич, Морозов Григорий Макарович (Ульяновск обл), Крылов Валентин Иванович (Патирек), Матвеев Афанасий Иванович (Палтиел), Самсонова (Павлова) Елизавета Васильевна (Васан), Павлова Ольга Васильевна (Васан), Любимов Михаил Платонович (Энтĕръел), Мресов Василий Никандрович (Пуянкасси) 1940—41 çулсенче директор пулса ĕçленĕ.



**1937—1942-мĕш çулсенче Васан шкулĕнче ĕçленĕ, вăрçăра паттăрсен вилĕмĕпе вилнĕ Е. Г. Кириллова.**

# 8. Вăрçă çулĕсем...



**ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Васан шкулĕнче 40-мĕш çулсенче ĕçленĕ учительсен ушкăнĕ** (сулахайран — сылтăмалла): **малтанхи ретре ларaççĕ — А. В. Ларионов, Л. А. Карсаков завуч, Е. Т. Терентьев директор, А. И. Павлова, Н. Г. Павлов, иккĕмĕш ретре — О. Л. Николаева, М. П. Баскакова, Е. Г. Кириллова, Н. Н. Туктарова, виççĕмĕш ретре — Н. И. Митрофанов, А. Р. Вашуркин, Д. П. Яковлев.**

* *

Вăтăрмĕш çулсен вĕçĕнче, хĕрĕхмĕш çулсен пуçламăшĕнче ял çыннисен пурнăçĕ те, шкул пурнăçĕ те йĕркеленсе, тăнăçланса çитнĕ ĕнтĕ, пурте çутă пуласлăха шанса тăнă. Çамрăксем çителĕклĕ пĕлÿ илсе çĕршыва юрăхлă çын пулма ĕмĕтленнĕ, Хăшĕсем аслă шкулсемпе техникумсене вĕренме кĕрсе тарăн пĕлÿллĕ специалистсем пулма хатĕрленнĕ. Анчах çынсен çутă ĕмĕчĕсене хăрушă вăрçă татнă, фашистла Германи пирĕн çĕршыв çине сĕмсĕррĕн тапăнса кĕнĕ...

Вăрçăн малтанхи кунĕсенчех шкулта ĕçлекен арçын учительсем Тăван çĕршыва хӳтĕлеме тухса кайнă. Вĕсем хыççăн тин çеç алла аттестат илнĕ каччăсем те салтакăн хурлăхлă юррине юрласа, юратнă савнийĕсемпе сывпуллашса фронта кайма пуçланă.

Çапăçу хирĕсенчен учительсенчен те каялла таврăнайманнисем темиçе. Васан ял халăхĕ фронтра паттăррăн çапăçса пуç хунă И. Г. Павлов, Н. И. Митрофанов, П. П. Бабаев тата ытти учительсене нихăçан та асран кăлармĕ, ĕмĕр-ĕмĕрех асăнса пурăнĕ вĕсене.

Вĕсен шутĕнчех çамрăк учительница, хăй ирĕкĕпе вăрçа тухса кайнă Кириллова Евгения Григорьевна та вăрçă хирĕнчех выртса юлнă.

«Епле лайăхчĕ, ырă чун-чĕреллĕччĕ вăл, пирĕн Евгения Григорьевна! Ачасене тӳрĕ кăмăллă, хастар, тирпейлĕ те ĕçчен пулма, Тăван çĕршыва чĕререн юратма вĕрентетчĕ. Ял халăхĕпе тачă çыхăну тытатчĕ, хастар агитаторччĕ. Ăна пирĕн Васан халăхĕ халĕ те ырăпа асăнать. Евгения Григорьевнаран тĕслĕх илсех эпир те, хамăр класри виçĕ хĕрача: Павлова Ольга Герасимовнапа Яковлева Ольга Петровна тата эпĕ учитель профессине суйласа илтĕмĕр, пурнăçа халăха вĕрентес ĕçе халалларăмăр», — хумханса аса илет А. П. Васильева ватă учительница.

1937-мĕш çулта пуçланă Васанти шкулта ачасене вĕрентме Пуянкасси хĕрĕ Патăръелĕнчи педучилищĕне пĕтерсе килнĕ хыççăн. Чунне парса ĕçленĕ вăл хăйĕн юратнă ĕçĕнче, ачасене хытă юратнă. «1942-мĕш çулхи апрель уйăхĕнче юратнă учительницăна вăрçа ăсатса ятăмăр. Пĕтĕм шкул, ял-йыш тухнăччĕ ăна ăсатма. Чунтан хурланса уйрăлтăмăр учительницăран... Шел, таврăнаймарĕ вăрçăран, пĕр çапăçура вилмеллех аманнă терĕç... Эпир ăна нихăçан та манас çук...», — куççульне шăлса аса илеççĕ паян унăн вĕренекенĕсем.

1944-мĕш çулхи февраль уйăхĕнче, Белоруссири пĕр ялта пулса иртнĕ юлашки çапăçу Е. Кирилловашăн. Акă мĕн аса илеççĕ çак самант пирки унăн вăрçăри хĕр-тантăшĕсем О. А. Гуленкова (Кивĕ Шăмăршă хĕрĕ). О. И. Шихранова (Анат Чаткас):

...Вĕсем пысăк мар постра тăратчĕç. Хăйсене çирĕплетсе панă района сывлăшран тапăнасран сыхлатчĕç. Вăл-ку сиксе тухсан тӳрех телефонпа батальона пĕлтермеллеччĕ.

Сăнав посчĕ Барановичи хулинчен инçех мар вырнаçнă Хол-

мы яленчеччĕ. Унта икĕ арçын та виçĕ хĕр пĕрмай дежурствăра тăратчĕç, батальон штабне донесенисем паратчĕç. Февралĕн 8-мĕшĕнче çĕрле пост çине тăшманăн пĕр взвочĕ тапăннă. Вăйсем пĕр пек пулман: кашни çын пуçне 3—4 гитлеровец. Пострн Морозова çакăн çинчен телефонпа батальона пĕлтерме тăнă, анчах та тăшман çыхăнăва татма ĕлкĕрнĕ. Вара хăйсен çеç хӳтĕленме тивнĕ. Пиллĕкĕш те вăй çитнĕ таран хирĕç тăнă. Парăнманнине кура, фашистсем пост çурчĕ тавра çапăсем хурса тухнă та бензин сапса тивертсе янă. Çĕрпӳртре тĕтĕм явăннă, йĕритавра вут хыпса илнĕ.



**УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: шкулта вăрçă çулĕсенче ĕçленĕ учительсем — Е. П. Лукьянова, А. И. Павлова, И. А. Фролов, О. В. Дмитриева, М. П. Терентьева, О. Г. Павлова, А. И. Бочурина, А. С. Семенова, Д. П. Яковлев, А. П. Васильева, З. П. Баскакова.**

Парӑнма шутламан хӑюллӑ сӑнавҫӑсем, тӑшманпа юлашки патронччен ҫапӑҫнӑ. Акӑ вут-ҫулӑм пост ҫуртне пӗтӗмпех ярса илнӗ, сывлама ҫук тӗтӗм йӑсӑрланнӑ, шалта текех чӑтма май килмен. Пилӗк паттӑр тӑшманункине татма шутланӑ, ҫӗрпӳртрен сиксе тухнӑ та ҫырма хӗррине ҫитнӗ. — «Тата кӑштах ҫеҫ чупмалла, вара хӑтӑлатпӑр!» — кӑшкӑрса хавхалантарасшӑн пулнӑ пост начальникӗ Женя Кириллова сержант-коммунист. Сасартӑк ҫурӑмне темӗскер хыттӑн пырса ҫапнине, хул калакӗ патӗнче пӗҫерсе илнине ҫеҫ туйнӑ Женя, ҫӗре тӗшӗрӗлсе аннӑ... Унӑн кӑвак тӳпе пек таса куҫӗсем ӗмӗрлӗхех хупӑннӑ вара. Шӑмӑршӑ хӗрне Зоя Люнгинана та фашистсем персе ӳкернӗ...

Женьӑпа Витяна Холмы ялӗн масарне пытартӑмӑр. Ҫӗр ҫине телей курмах ҫуралнӑ пекчӗ Женя та, Зоя та. Анчах вӗсен пурнӑҫне чечеке ларнӑ вӑхӑтра хаяр вӑрҫӑ татрӗ. Вӗсем пире вара хӑйсен пурнӑҫӗн пӗр пайне парнелесе хӑварнӑнах туйӑнать. Вӗсем вилнӗ, эпир вара пурсӑмӑршӑн та пурӑнатпӑр пек.

Вӑрҫӑ ҫулӗсенче шкул директорӗ пулма Павлова Анастасия Ивановна учительницӑна уйӑрса лартаҫҫӗ. Унӑн мӑшӑрӗ Павлов Николай Герасимович учитель те ыттисемпе пӗрле вӑрҫа тухса каять. Тӗрлӗ ҫапӑҫусенче, те, тӑшман тыткӑнӗнче те нуша тӳсме тивет унӑн. Вӑрҫӑ хыҫҫӑн Николай Герасимович мӗн тивӗҫлӗ канӑва тухиччен тӑван шкулта математика учителӗ, завуч, 1967—75 ҫулсенче шкул директорӗ пулса ӗҫлет.

Вӑрҫӑ хирӗнчен аманса таврӑннӑ учительсем каллех ачасене вӗрентме тытӑнаҫҫӗ, фронтри, ҫапӑҫу хирӗнчи тусӗсемшӗн те ырми-канми ӗҫлеҫҫӗ, фронта мӗн пултарнӑ таран пулӑшма тӑрӑшаҫҫӗ.

Ҫакӑн пек йывӑр тапхӑрта шкулта ӗҫленӗ хӗрарӑм-учительсем К. А. Мордвинова, Е. П. Лукьянова, О. В. Дмитриева, Л. А. Долгова, А. И. Бочурина, А. С. Семенова, Ф. А. Ларионова, О. Г. Павлова, А. Р. Вашуркина, О. Н. Головинская, А. И. Давыдова, Е. И. Муромцева, А. П. Васильева, О. Л. Николаева, М. П. Терентьева, З. П.Баскакова вӑрҫӑран аманса таврӑннӑ фронтовик-учительсем: Лукьянов И. П. (1944—55 ҫулсенче шкул директорӗ пулса ӗҫленӗ, историпе географи учителӗ). Н. М. Головинский, Фролов И. А., Н. С. Семенов мӗнпур йывӑрлӑха ҫӗнтерсе ял ачисене пӗлӳ пама пулӑшнӑ.

А. П. Васильева аса илнинчен: «Епле йывӑр пурнӑҫпа, выҫӑллӑ-тутӑллӑ пурӑнсан та шкулта тӑрӑшса вӗренеттӗмӗр.

Кĕнекесем, хут-кăранташ, чернил çукпа пĕрехчĕ. Чернила хĕрлĕ чĕкĕнтĕр сĕткенĕпе хăрăмран е вăрманти юман кăмпинчен туса хатĕрлеттĕмĕр. Перо вырăнне хур тĕкĕпе усă кураттăмăр. Кивĕ кĕнеке йĕркисем хушшине е хаçат хĕррине çыраттăмăр. Грифель хăмасем те пурччĕ. Тĕрĕслев ĕçĕсене çырнă чухне учительсем çур листа хут паратчĕç.

Классенче хĕлле питĕ сивĕччĕ. Çиелти тумтире, алсасене уроксенче хывмасăрах çырнă. Чернил ан шăнтăр тесе хĕвре тытаттăмăр. Пурлă-çуклă вутăпа классене ăшăтайманнине пула уйрăм çынсен çуртĕсенче те вĕренеттĕмĕр. Вăрмана та вутă туртма учительсемпе пĕрле хамăрах кайнă.

Вăрçă вăхăтĕнче ялти ачасем нумайăшĕ шкула çÿреймен, фронта кайнисен вырăнне, çитĕннисемпе пĕр тан ĕçлеме лекнĕ вĕсен. 1940—41-мĕш çулхи вĕренÿ çулĕнче шкула 44 ача пĕтерпĕ пулсан, 1942-мĕш çулхине 19 ача çеç вĕренсе тухма пултарнă.

Аслă Отечественнăй вăрçă Çĕнтерÿпе вĕçленсен фронтовик-учительсем килĕсене таврăнма пуçлаççĕ, хăйсен юратнă ĕçне çĕнĕрен кÿлĕнеççĕ. Математика учителĕсем: Н. Г. Павлов, М.А. Поляков, И. А. Николаев, С. И. Уресметов истори учителĕ, ĕç учителĕ Ф. Л. Николаев, пуçламăш класс учителĕсем П. Ф. Архипов, Е. Т. Терентьев, Д. П. Яковлев, 4—5 çул хушши ачасемсĕр тунсăхланăскерсем çĕнĕ хавхаланупа ĕçлеме пуçлаççĕ хăйсен пĕлĕвĕсене, сывлăхĕсене ачасемшĕн параççĕ.

## 9. Васанта—вăтам пĕлÿ паракан шкул

1950—65-çулсенче шкула аслă тата ятарлă пĕлÿ илнĕ çамрăк учительсем те килме пуçлаççĕ. Химипе биологи вĕрентекенсем Ф. П. Елисеева, И. И Иванов, З. Ф. Моловствова, Л.А.Леонтьева, Л. Р. Захарова, Р. У. Ракипов, Т. И. Осипова, А. Н. Нестерова, М. Д. Ефремова, И. М. Юманов, К.Н.Нусина, истори учителĕсем Х. К. Яковлев, А. А. Валиуллин, (1964—65 çулсенче шкул директорĕ), математика учителĕсем Е. Я. Гусьлярова, М. И. Фомин тата И. М.Савельев (1956—61 çулсенче шкул директорĕ), Н. С. Падиаров, Ф. И. Николаева, Л. Д. Матвеева, чăваш чĕлхипе литература учителĕсем Р. И. Мулдина, Р.П.Осипова, А. Н. Павлова, Н. П. Храмова, М. В. Ур-

кова, Р. И. Ермакова, вырăс чĕлхипе литература учителĕсем С. В. Закускина, Т. Н. Шарафутдинов, З. И. Тестова, П. Н. Никитин, Р. Р. Низамов, А. П. Малов (1955—56 çулсенче шкул директорĕ), А. М. Крылова, А. В. Серина, А. А. Иванова, Л. А. Ворожцов, В. А. Валиуллина, Н. П. Смирнова, Е. Н. Масленникова, А. Н. Лысов, физкультура учителĕсем Н. М. Головинский, Ф. Н. Сейфутдинов, И. И. Вазанов, И. М. Юманов, А. П. Ишмукова, А. Н. Захаров, акăлчан чĕлхи учителĕ Е. М. Волкова, физика учителĕсем Л. М. Чернова, В. А. Смирнова, музыка учителĕ А. Г. Григорьев, ĕç учителĕ А. А. Парфенов, пуçламăш класс учителĕсем Е. И. Гаврилова, Ю. П. Фомина, Л. М. Карсакова, Ф. П. Петров, М. С. Падиарова, О. А. Сидорова тата ытти учительсен хушамачĕсем шкул историне ĕмĕрлĕхех çырăнса юлĕç.

Вăтам шкул пĕтерес текенсен Шăмăршă е Палтиел шкулне çӳреме тивнĕ. Çакна шута илсе Васанта 1964-мĕш çулта 8 класлă шкултан вăтам шкул туса хунă. Ял хĕрринчи илемлĕ вырăнта çĕнĕ шкул çуртне туса лартнă. Вăл вăхăтра шкул директорĕ пулса ĕçленĕ Михаил Иванович Фомин çак ĕçре пысăк пултарулăх кăтартнă, ĕçе пĕлсе йĕркелесе пынă. Халĕ ĕнтĕ тĕп шкул çурчĕ çĕнĕ çĕре куçнă. Ял варринчи шкулта пуçламăш классем çеç вĕреннĕ.

М. И. Фомин директор пулса ĕçленĕ вăхăтра çĕнĕ шкулăн сăнавпа опыт тата вĕрентӳ лаптăкне йĕркеленĕ, пысăк улма сачĕ лартса хăварнă. Илемлĕ сад пахчи паян кун та шкул чысĕ, унта кашни çулах тĕрлĕ тĕслĕ тутлă панулмисем, чие, хăмла çырли тата ытти тĕрлĕ пахчаçимĕç пуçтарса илеççĕ.

Ачасен шучĕ ӳссе пынине шута илсе çĕнĕ шкул çурчĕ çумĕнче 1966-мĕш çулта Х. К. Яковлев директор «Г» хушма корпус тутарса лартать. Вăл вăхăтра шкулта мĕнпурĕ çичçĕре яхăн ача вĕреннĕ. Сăмахран, 1967-мĕш çулта 5-мĕш класа пурĕ 72 ача пуçтарăннă. Каярах ăна виçĕ пая пайласа «а», «б», «с» классем туса хунă.

Шкул çулсерен лайăхланса, ачасен шучĕ ӳссех пырать. 1946—47-мĕш вĕренӳ çулĕнче шкулта 120 ытларах ача вĕреннĕ пулсан, 1950—51 çулсенче — 380 ачана, 1965—66 çулсенче — 618 ачана, 1970—71 çулсенче 680 ачана çитет. Вĕсене 36 учитель вĕрентнĕ. Çав шутран 28-шĕ аслă пĕлӳ илнĕ. Шкула, васансемсĕр пуçне, Ярăслав, Асъял, Пуянкасси ялĕсенчи ачасем вĕренме çӳренĕ (Пуянкассинче 60—70-мĕш çулсенче

вăтам шкул пулман-ха).

Учительсен ушкăнĕ ялтанах çĕнелсе пынă. Кашни çулах шкулта 7—8 учитель улшăннă, çамрăк специалистсем,уйрăмах тĕрлĕ облаçсемпе республикăсенчен килекен учительсем,кăмакапа хутса ăшăтакан шкулта, кĕркуннепе çуркунне вăхăчĕсенче район центрне те тухса кĕме май çук пулнăкта çулсемлĕ ялта, ялти çынсем патĕнче хваттерте пурăнмалли условисенче ĕçлеме килĕшмен, виçĕ çуллăх «срокне» ĕçлесе татсанах (е тĕрлĕ сăлтав тупса çур çултанах) пăрахса кайнă. Вырăнти учительсем çителĕксĕртерех пулнă-ха ун чухне. Çапах та йыш тĕрекленсех пынă, вăтам пĕлӳ илнĕ çамрăксем тĕрлĕ аслă вĕренӳ заведенийĕсенче вĕренме кĕрсе учительсем пулма хатĕрленнĕ.

1965-мĕш çулта М. И. Фомин директора Шăмăршă районĕçтăвком председателĕн заместительне ĕçлеме илеççĕ. Шкул директорĕ пулма Валиуллин Абрар Айнетулловича çирĕплетеççĕ. 1967—1968-мĕш вĕренӳ çулĕнчен пуçласа 1975 çулччен шкул директорĕнче Павлов Николай Герасимович вăй хурать. Çак вăхăтра ял варринче учительсем валли пурăнмалли общежити туса хураççĕ, каярах шкул çумĕнчех икĕ хваттерлĕ тепĕр çурт та ӳссе ларать.

1976-мĕш çултан пуçласа Х. К. Яковлева каллех шкул директорĕ пулма уйăрса лартаççĕ. 18 çул хушши Васанти вăтам шкула Харитон Константинович пĕр улшăнмасăр ертсе пынă. Паллах,сахал мар вăй-хал, сывлăх пĕтерме тивнĕ унăн çак хушăра. Уйрăмах шкулăн кирпĕчрен купаланă икĕ хутлă çуртне тутарас енĕпе нумай тăрăшса «чупма» лекнĕ унăн. Çапах та тытăннă ĕçе вĕçне çитерет-çитеретех вăл. Паллах,ку ĕçе пĕччен пурнăçлаймастăн ĕнтĕ. «Гвардеец» совхоз директорĕ В. Н. Никифоров та, вăл вăхăтра ялхуçалăх министрĕ пулса ĕçленĕ Васанта çуралса ӳснĕ Г. П. Леонтьев та сахал мар тăрăшнă ялти çĕнĕ шкула тусахута ярассишĕн.





**УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ:** хĕрĕх çул ытла **Васанти шкулта ĕçленĕ Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕ Агафия Петровна Васильева черетлĕ урок ирттерет. 1990 çулсем.**

* *

Харитон Константинович шкулта ĕçлекен вырăнти кадрсене хатĕрлес енĕпе те сахал мар тăрăшнă. Учитель ĕçне юратакан, хисеплекен ял çамрăкĕсене пурнăçра тĕрĕс çул кăтартса педагог профессине суйласа илме пулăшнă, вăтам пĕлӳлрĕ çамрăксене шкула ĕçлеме илсе аслă вĕренӳ заведенийĕсене заочно вĕренме кĕме мĕнпур майсем тупса пама тăрăшнă. Çамрăк учительсене ĕçре, методика пулăшăвĕсем, сĕнӳсем, ырă сăмахсемпе хавхалантарса та, хăш чухне хистесе те ĕçе юратса пурнăçлама вĕрентсе пынă. Унăн пурнăç опычĕ те, пултаруллăхĕ те пысăк, çавăнпа хисепленĕ, тĕслĕх илнĕ унран ачасемпе вĕрентекенсем. Ял хушшинче те пысăк авторитетпа усă курать Харитон Константинович, обществăлла ĕçсенче хастар хутшăнать.

Яковлевсен çемйине учительсен династийě тесен те тĕрĕс пулě: мăшăрě — Елизавета Яковлевна — 30 çул ытла ĕнтĕ ачасене математика вĕрентет. Вăл та мăшăрĕ пекех, «Халăха вĕрентес ĕç отличникĕ» ята тивĕçнĕ, Российăри, Чăваш республикинчи Çутĕç министерствисен Хисеп грамотисене парса чысланă ăна хастар ĕçленĕшĕн. Вуншар ачана ташă ăсталăхне вĕрентнĕ Елизавета Яковлевна шкулта ĕçленĕ çулсенче. Вăл ертсе пынă ташă ушкăнĕсене районта çеç мар, республикăра та лайăх пĕлнĕ. Паян та сумлă учительсем ялти обществăлла ĕçре чи малтисен ретĕнче.

Васан шкулĕнче нумай çул хушши ĕçленĕ учительсене те ял халăхĕ яланах ырăпа аса илет. Химипе биологи учителĕ пулса ĕçленĕ Ракипов Рестем Усмановича 60-мĕш, 70-мĕш, 80-мĕш çулсенче шкулта вĕреннĕ çынсем нихăçан та манмаççĕ пулĕ. Чи хисеплĕ, чи ăста, чи пултарулă учительсенчен пĕри вăл районта. Унăн урокĕсенчемĕнле наян ача та ĕçсĕр ларман, пурне те тарăн пĕлӳ пама тăрăшнă вăл, юлхавсенчен çирĕп ыйтнă, çавăнпах чунтан хисеплеççĕ те ăна вĕренекенĕсем. Халĕ Рестем Усманович Шăмăршă шкулĕнче ачасене вĕрентет. «Халăха вĕрентес ĕç отличникĕ», «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕ» хисеплĕ ятсене, Хисеп грамотисемпе нумай сумлă парнесене тивĕçнĕ вăл хăйĕн пархатарлă ĕçĕшĕн.

Вырăс чĕлхипе литература учителĕ пулса 34 çул ĕçленĕ Васанти вăтам шкулта Лев Алексеевич Ворожцов. Нумай çул хушши шкул завучĕн йывăр лавне туртса пынă вăл. Миçе теçетке çамрăк учителе пурнăç çулĕ çине тухса ăста педагог пулма пулăшман-ши вăл хăй ĕçленĕ çулсенче? Миçе çĕр ачана вырăсла тĕрĕс вулама-çырма, тĕрлĕ произведенисене тĕрĕс хаклама вĕрентмен-ши? Лев Алексеевич паян тивĕçлĕ канура пулсан та шкула манмасть, пырсах çӳрет.

Çӳлерех асăннă ырă сăмахсене тĕрлĕ вăхăтра ĕçленĕ ытти нумай-нумай учительсене те калас килет шкул юбилейĕ умĕн. Математика вĕрентнĕ Г. Н. Алексеев, В. К. Андронов, Н. В. Егоров, О. Г. Козлова, Г. А. Куракова, А. Д. Поляков, Е. М. Чуплыгина, В. С. Волкова, Ф. Н. Иванова учительсене, Г. П. Бабочкин. (халĕ районти çутĕç управленийĕн пуçлăхĕ), Ш. Ш. Исмагилов, Н. Г. Константинов, Л. А. Кушева, Н. Г. Любимова, И. П. Скворцов, В. М. Смирнов, Р. Р. Туктамышев, В. А. Турханова, Л. М. Чернова, В. Д. Чеменева, Р. Х. Яковлев, В. В. Денисов, физика учителĕсене, В. В. Воробьев, А. И. Жи-

вотиков, И. М. Корняков, В. П. Малинин, Н. В. Падюков Н. В. Пименов (тăпри çăмăл пултăр), С. П. Севрюгина, В. Г. Çидоров, М. Н. Сорокин, Г. Н. Тимофеев, Ф. С. Яфизов, А. И. Сатеев, Н. В. Бельцов физкультура учителĕсене, Ф. Н. Белова, Л. М. Ельцова, Н. Н. Зобов, О. А. Полякова, Г. В. Смирнова, И. А. Тивофеева, З. М. Харитонова, Р. В. Храмова, Т. В. Ястребова, А. В. Яранцев акăлчан чĕлхине вĕрентекен учительсене, биологипе хими предмечĕсене вĕрентнĕ А. И. Андреев, Р. А. Егорова, В. Г. Елисеев, В. В. Землякова, Н. В. Малинина, З. Н. Садетдинова, В. К. Смирнов, Ю. И. Фролов, Г. Г. Измайлова, И. Р. Валиев учительсене, географи вĕрентнĕ Садетдинов Ш. В. учителе, Н. А. Захаров, А. М. Матвеева, Р. Г. Никифорова истори учителĕсене, чăваш чĕлхипе литературине вĕрентнĕ Каримов М. В., Н. П. Храмова, Д. А. Смаева, Д. В. Макарова (Вазанова) учительсене, вырăс чĕлхипе литературине вĕрентнĕ Н. С. Бахлунова, В. А. Валиуллина, В. В. Душева, Н. А. Иванова, Н. В. Иванова, А. А. Кутырева, Н. И. Кашеева, А. Н. Кислова, А. В. Любимова, Т. В. Лазарева, Б. П. Милых, Р. Р. Низамов, Н. Е. Платонова, Т. К. Понамарева, Г. В. Разумова, Л. В. Соколова, Н. Л. Савельева, Г. М. Сандрейкина, Н. И. Туровская, З. А. Шустова, А. А. Шурякова, О. Л. Щукина, Т. К. Навошина учительсене, музыкăпа юрă ăсталăхне вĕрентнĕ А. М. Магарина, Р. И. Петрова, Ф. Н. Сейфутдинов, З. И. Уркина, Е. Э. Эктова, Л. П. Ермолаева учительсене, рисованипе черчени вĕрентнĕ Ю. М. Алексеев, И. И. Вазанов, Л. Е. Евграфова, Т. Я. Лукина, А. Н. Николаева, И. А. Терентьева, З. П. Морозова, ĕç учителĕсем В. В. Морозов, Н. Н. Антонов, А. П. Еремеев, А. Н. Сидоров инженерсене, пуçламăш классене вĕрентнĕ Н. Т. Герасимова, Л. Н. Ефимова, Т. Н. Кудряшова, Л. К. Измукова (Халăха вĕрентес ĕç отличникĕ» знак илме тивĕç пулнă) Р. И. Тимофеева, Р. С Урмаева, В. Н. Артемьева, А. К. Хлюкин (биологи) учительсене вĕсен вĕренекенĕсем нихçан та асран кăлармĕç.

Шкултан вĕренсе тухнисене, тĕрлĕ вăхăтра ĕçленĕ учительсене пурне те менельник ячĕпе саламлатпăр, хăнана чĕнетпĕр. Шкул юбилейне май (çу) уйăхĕн 7—8-мĕш кунĕсенче паллă тума йышăннă. Халиччен çак шкулта тĕрлĕ вăхăтра ĕçленĕ çынсенчен, вĕренсе тухнисенчен те асаилусем кĕтетпĕр.

Çак кĕнекене кун çути кăтартма спонсор пулса пулăшнăшăн Шăмăршă типографине (директорĕ И. М. Миронов), «Шăмăршă хыпарĕ» хаçат редакцине (редакторĕ П. И. Фомин), район администрацине (пуçлăхĕ В. П. Фадеев, унăн çумĕ А. А. Бочкарева), И. М. Саландаевпа В. Н. Михайлов журналистсене чун-чĕререн тав тăватăп.

АВТОР,

## ТУПМАЛЛЛИ

1. Ялти шкул—пĕлӳ çăлкуçĕ 3.
2. Пĕр ĕмĕр каялла 9
3. Çĕнĕ самана тапхăрĕ 11
4. Шкул çĕнĕ çурта куçать 12
5. Шкулти учитель—пулас халăх писателĕ 14
6. «Троцкист» тесе айăплама пăхнă 15
7. Ялти шкул—культурăпа пĕлӳ вучахĕ 16
8. Вăрçă çулĕсем 21
9. Васанта—вăтам пĕлӳ паракан шкул 25

**ЛАРШНИКОВ**

**Герман Николаевич**

Родная школа — очаг знаний

Документальный очерк

(На чувашском языке)

Редактор САЛАНДАЕВ И. М.

Корректор МИХАЙЛОВ В. Н.

Заказ 270. Тираж 500

Шемуршинская типография ЧР.

3000=